21-мĕш №. Хакĕ 5 пус. 1931-мĕш çул. Нойапĕр.

# КАПКĂН



Претприйаттисемпе колхоссенђи уравнилăвккă (ĕçленĕшĕн пĕр тан тӳлени) кăвисене çапса салатар, тĕп тăвар.

# Иванов вир валеçет

Калай

Хӑт̆ Иванов валеçтӗр, хӑт̆ Петров, йе Çитӑрӑв вӑл пурӗ-пӗрех. Тунӑ ырлӑха, вађеçмелли тӳпене камӑн та пулин валеçмеллех ӗнтӗ. Кун пирки, валеçес тӗлӗшрен, кам валеçнишӗн калаçу та, тавлашу та пулма пултараймаст̆.

Çитӑр, Куçма, Иван Йӑванђшӑн вир валеçни нимех те мар. Мӗншӗн тесен вӗсем пурте колхоса кӗмен хресђенсем. Анђах, темшӗн пайан кусем те:

— Та... колхос... те Хӗрлӳкасси (Хӗрлӗђутай район̆ӗ) колхосӗ вир валеçни çинђен калаçаççӗ... Тӗрӗс мар ку ӗç?.. капла пропат̆ош,—тесе пуçӗсене хыçаççӗ. çавӑнтах тата „пуса, кантӑр“ тесе пуçӗсене хыçаççӗ.

— Мӗн пулнӑ?..Ма пуçӑрсене пӑркаласах хуйхӑрнӑ пек пуплеттӗр?

— Хуйхӑрӑн... Калаçӑн, вӗт хамӑр умрах тӗлӗнмелле ӗçсем пулаççӗ. Ыран пайан колхоса кӗрес пек тӑратпӑр, колхосри тӗрӗсмарлӑхсем пире ђӑнахах шухӑшлаттараççӗ.

Пирӗн Хӗрлӳкасси колхос претçетаттӗлӗ кӑçал колхосра тупӑшсене валеçсе тӗлӗнтерет,—терӗ пӗри. Снађђӑт,мӗнле пуласси.. Пирӗн колхос претçетаттӗлӗ—Иванов кӑçал пур йапалана та „ӗç тӑрӑх“ валеçегӗп тесе валеçет. Хӑй вађђи пур çӗрте те пысӑк тӳпе кӑларат̆. Ку пире тӗлӗнтерет, колхоса кӗрес çӗртрен те ђӑрмав кӑларат̆.

—Ӗç тӑрӑххӑн валеçмелле... Кам мӗн ђул, мӗн ӗçленӗ, ӗçӗн пахалӑхӗ мӗнле—çавӑн тӑрӑх валеçмелле. Куна кӑçалхи çулта, малашне те пурнӑçа çирӗппӗнех кӗртсе пымалла.

— Епӗр куна хирӗç мар. Пирӗн Иванов, хӑй правленинђе ӗçленӗ май, уйри ӗçсене йерсе ӗçлемен, арӑмӗ те кӑшт-кӑшт анђах ӗçе çыпӑçкаларӗ. Çак Иванов хӑй правленинђе ӗçленине пӗр пек ӗçкунӗ çырса, колхосра ђи нумай ӗçкунлӗ ђлен пулса тӑђӗ.

— Вара?...

— А, мӗн тата вара? Ниçти ӗçрен йулмасӑр ӗçлекеннисем, сухаçсем кайа йулђӗç. Пуса валеçрӗç—Иванов 300 çурӑм илнӗ, тата хам ӗç шутӗнђен—тесе ратнисене 50 çурӑм панӑ, вир валеçрӗç—Иванов 16 пӑт илнӗ, ђи суртлӑ таса тутӑ вирне. Çав хушӑрах ђи аван ӗçленӗ ђленсем 20—30 çурӑм сӳс-кантӑр, 2—3 пӑтшар илкеленӗ.

—Тӑхта-ха, Иванов анђах мар, ытти правлени ђленӗсем те аванах çаклатнӑ,—терӗ тепри.

— Пуху мӗне пӑхнӑ?... Пухура ма калаçса таталман?... Саккун тӑрӑх претçетаттӗле, йе правлени составӗнђе ӗçленӗшӗн, планпа йышӑннӑ ӗçсене çителӗклӗ пурнӑçа кӗртнӗшӗн, пуху йышӑннӑ тӑрӑх ӗçкунӗ çырса памалла. Правлени претçетаттӗлӗ, йе ђленӗ ку тӗлӗшпе нумай ӗçкунлӗ пулсан та, ђи хастарлӑ ӗçлесе малта пыракан колхос ђленӗнђен протукт ытлашши илме пултараймаст̆.

— А-а... виш унта йепле.. Калатпӑр ум-саккуна пӑсаççӗ, тесе, Пирӗн вӗт апла тумаççӗ...

Старикскн калаçуне итленӗ хыççӑн, Иванова курас тесе, карӑм колхос кӗнђелерне. Мур илесшӗ, телей пулмарӗ: кӑнђелерне питӗрнӗ пулђӗ. Кӗретӗп йалканашне, претçетаттӗлпе калаçатӑп.

— Колхос ӗçӗсем çинђен отђотсем итлени йалканаш ларунђе?

— Çук, итлемен...Ивановпа ӑçтан калаçса туппине тупан?—терӗ йалканаш претçетаттӗлӗ.

— Тӗрӗс-и Иванов хӑйне вађђи 16 пӑт (арӑмӑпе иккӗшӗ анђах пурнаççӗ пулин те) вир илсе, ђылайах ӗçлекенсемех 2—3 шер пӑтшар илни?

— Тӗрӗс... ђленсем нумайӑшӗ макӑраççӗ,—терӗ хӑй йалканаш пуçлӑхӗ.

— Йепле ку ара?.. Иванов вӗреннӗ çын. Кӗр вӑхӑтра çак Иванов Райколхоссойус инструктӑрӗ пулса ӗçленӗскер, мен тӑват̆ колхосра?

Иванов ку йӗркесене пӗлмен çын мар. Ку ӗç Иванов пӗлменнинђен пулса тӑнӑ тесе хакласа ӑна каçармалла мар. Кун пек Ивановсемпе полђшевикла хайарлӑхпа кӗрешсе, ку тӗрӗс марлӑхсене тӗппипех кӑкласа ыватса йамалла. Ивановӑн „сӑхӑ“ шӑнӑрӗ ӳссе кайса, колхосра хӑйне вађђи тата ратнисене вађђи ӑшӑ йава çавӑрса ӗçсем тунипе çирӗппӗн кӗрешмелле Ӑçтан, мӗлле тивӗçлӗхпе хӑйне вађђи 300 сурӑм таран сӳс кантӑр, 16 пӑт таран вир илнине, тата ђи аван ӗçленӗ колхоçнӗксем мӗнђул шар илнине тӗрӗслесе, Иванова ответ тытгармалла.

Çак Ивановах колхоçнӗксене автосавӑта, йе урӑх савӑтсене йарассине те хирӗç пырат̆ Кайас тесе хапӑл тунӑ ђленсене хапрӑк-савӑта йамасӑр верçса тӑнисем те пулнӑ.

Çак ӗнсене пурне пӗрле пӗтӗçтерсен, манӑн çакӑн пек ыйту лартас килет:

— Кам вӑл Иванов?.. Колхос тӑвас ӗçре йӗркесӗрлӗхсем туса, колхос ӗçне ђӑрмантаракан мари? Колхос претçетаттӗлӗ пулса колхос пӗркенђи айӗнђе „шатнӑç“ ђирӗпе ђирлесе кайнӑскер мари? Апла пулсан емеллес... Ретсепне çырма РКИ-пе Райкома ыйтас.

## Вӑхӑт çук пулнӑран.

Пӗр пӳрократ каланӑ:

— Хӗл çитрӗ—тенӗ.

Пӳрократ ӑна хирӗç:

— Çитрӗ пулсан.. Ыран килме кала. Пайан манӑн вӑхӑт çукха,—тенӗ.

Шупашкар районӗнђи Куснарта хут пӗлменнисене халӗ те вӗрентме тытӑнман.

— Мӗншӗн вӗрентме тытӑнман?

— Мӗншӗн тесен райçутпайӗн ӗçе йӗркелесе йама вӑхӑт пулман?

— Ма вӑхӑт пулман?

— Куђтестафетӑсем иртерсе йамалла пулнӑран

## Пӗтнӗ вӗсем.

Çӗлӗкӗрсене илӗр! Хуйхӑллӑ хыпар пӗлтеретӗп. Пуçӑрсене хуйхӑллӑн тайсах итлӗр.

Микушкел йалӗнђи (Сталин районӗ, Вӑтам Атӑл крайӗ) К. Ç. Шкулӗнђе вӗренекенсем тӑрӑшса тунӑ помигорсем пуçтарса хунӑ хыççӑн ним усӑсӑрах çӗрсе пӗтнӗ, çулнӑ пӑрçине купаран пӗтӗмпех выђӑхсем çисе йанӑ, хӑйарӗ пулман, тесе пӗлтерет М. К.

Помиторсемпе пӑрçисем, есӗр пӗтрӗр! Анђах сирӗн ӗçӳ ђӗрӗ—шкул пуçлӑхӗсем йапӑххи çинђен пӗлтерсе тӑраççӗ вӗсем.

В. Çиçĕм

# Ĕçсĕр Петĕр

Колхос уй хир ĕçне пĕтерçĕ. Пуш кĕлтесем ахçанах капансене çывăрма кĕрсе вырнаçрĕç. Халĕ вĕсен сухалĕсене шур пас ĕмме тытăннă ĕнтĕ. Йалхуçалăх машшинĕсем сарайсенçе шăнни- ре шăлĕсене шаккаса лараççĕ. Сивви те, мур лешшĕ, никамран та хăрамасть. Кирек кама та ÿртелле хĕваласа кÿртет. Унпа кĕрешме пулта- ракансем сахал. Вăл вăйлă, пысăк. Хăлаçласа ытма хулăмсем те çитес çук. Вăл пĕççенех пуç улса кунти çĕр пиç çинçе ташлама тытăнçĕ, урлать, макрать тата вăл темшĕн. Пĕççенех алхасать...

Петĕр те пайан пĕççенех пÿртре йухса анакан мса шывĕсене пуç пÿрнисемпе шăлса, кукша ÿçне, кĕçĕллĕ ларçăкне кушак çĕрнисем пек ĕрнисемпе хыçça, кĕрĕк арки йăваласа ларçĕ. никам та килмерĕ ун патне, никам та ун вĕçкĕн ухăшĕсене пĕлесшĕн пулмарĕ.

— Вăт, ĕç пĕтрĕ ĕнтĕ халĕ, пуху тумасан кол- çнĕксемпе пĕрлешсе калаçма та çук. Невушлă- олхосăн хĕлле ĕççерех пурăнмалла пулĕ... Ла- йхха капл—шухăшларĕ Петĕр кантăкран ура алла пăхса ларнă хушăра. Ĕççĕр пурăнма, çăкăр урçĕ пулма кам хирĕçсе тăтăр. Нта-а,.. Мы кол- çникки.. С нами неççăвă расковариват.

Петĕр хăйне хăй вĕçтернине никам та итлемерĕ, ĕр тараккансем çеç кăмака йĕри тавра кăшăл- тса илçĕç. Вĕсем те ĕççĕр аптăранă пулас ĕншĕн тесен, кăмакаран уйăрăлса çăкăр вăрла- кайас пулсан, сивĕпе кĕрешес пулать. А сен вăй çитмест.

— Петĕр, мĕн ĕççĕр ларатăн? Уй-хир ĕçне пĕ- рнĕ те, ĕç пĕтнĕ терĕн-и? Çынсем ертелре пуху раççĕ, унга каймалла,—йатласа тухса карĕ лхос прикатирĕ.

Петĕр хыпăнса ÿкрĕ. „Ик-виç кун кăна ĕççĕр рăнтăмăр-çке, иçмаса каллех ĕçлеме лекĕши" рĕ вăл. Мăкланса кайнă çÿçĕсене кăтăрт-кăтăрт çса илçĕ, анса ларнă йĕмне хăрах аллипе турт- хăпартрĕ. Унтан пухăва тухса утрĕ...

* * *

—А-а.. Петĕр. Килех, иртсех лар—терĕ ăна лхос пуçлăхĕ пухăва пырса кĕрсен.

Халăх пухăнçĕ.

Ĕçе тытăнçĕç.

— Колхоса орканисатсипе хуçалăх йенçен çи летес пулсан, уй-хир ĕçне кăна ĕçлени çите сĕр. Хĕлле те пĕрлешÿллĕ хуçалăха усăллă ем ĕçлемелле. Халççенхи пек харпăрхăй хуçа- ĕшĕн кăна ĕçлемелле мар...

— Ну калăпăр, çулла паттăрăн ĕçленĕ. Хĕлле ма йурамасти вара? При том килти ĕçсене ахма никкак майĕ çук.

Петĕр сăмахне илтсе претçетаттĕл калама ça- нăççĕ. Вăл каллех хăйĕн халапне çăсрĕ.

— Епĕр 100 процçăнĕпех колхосра ĕçлетте- шĕн мар. Çемйери пĕр çынĕ, йе ик çынĕ кол- ĕçне тума пултараççех...

— А мĕн ĕçлесха халĕ? Колхос килкартине тма хамăн çĕçĕ çийекен Мишшана та илсе еймĕп ĕнтĕ...—çапрĕ каллех Петĕр.

— Сана ĕç тупса парăпăр епĕр, ççлеме ан ÿр-

— Апла ес, Петĕр, песрапотнике тухса кай- иха?Совет сойусĕнçе те песрапотнисем пур ен...

— Та йа не песрапотни пуласшăн мар, канас хоççу,—вăрçса тăкрĕ Петĕр.

— Та-а... Петĕре писрапатнинçен хăтармалла,— калаçса илçĕ Мускав кĕпĕрнинçе виç кун пурăн- нă Микиш.

— Вăт. Петок, епĕр мулла çуртĕнçи пĕр пÿ- лĕмĕнçе арçынсене çăпата тумалла пултăр, тепĕр пÿлĕмĕнçе хĕрарăмсене тĕрĕ тумалла тăвас тет- пĕр. Унта ĕçлеменнисене колхос урлă патшалăх ваççи çăпта çаптарас тетпĕр... Хăш ĕçĕнçе ĕç- леме шуглатăн?

— Ă-ăм-м... Çăпата тăвас—унта шаравар вара- ланать, çăпта çапас—унта ыйăх çывăрма вăхăт пулмасть... Никĕшне тума та аптрал...

— Каçалсене епĕр вăйпах ĕçлеттересшĕн мар, Петĕр. Ĕçлемесен—ĕçлемĕн...

Пĕр Петĕр çинçе ĕç тăмасть. Çăпата тăвас, терĕç.

— Йышăнас...

— Петĕре улахсем тăрăх çÿремелли ĕç парас. Хĕрсене сыхласа çÿретĕр...

* * *

Песрапотни Петĕр—халĕ те песрапотник, кол- хосра ĕçлемен пирки ăна колхосран кăларса пă- рахрĕç. Кахалсене колхосра тытса усранин усси пулмĕ, терĕç. Вăл Петĕр çулла та ĕçлемен пулнă. Йармăркkаран йармăрккăна çупса çÿресе унăн колхосра ĕçлеме вăхăт та пулман.

— Песрапотни Петĕрсем сирĕн колхосра çук-и?

## Йĕпреçре...

Йĕпреç райĕçтăвкомĕпе райколхоссойусĕнçе кĕçĕн хаçатсен конккăрсĕ çинçен пĕлмен. «Правтă» ха- çата вуламанни пелерçĕ. («Кр. Чув.» 270 №).




Çÿлти хĕрринçен пуçласа çакăнга çитиççен вулаççĕ.

# ПАТӐЛНӐ ӖМӖЙ



Шурӑм пуҫ сенкерӗн хыпсанах Ерхип вырӑнӗ ҫинчен тӑрса анасласа ларнӑ.

Унӑн хӑвӑл пуҫне витсе тӑракан ҫӳҫӗ кӑвакара пуҫланӑскер ҫӗр каҫачен йӑраланса клевӗр ути пек арпашӑнса чӑлханса кайнӑ.

Питне куҫне ҫуса шӑлӑнсанах ҫӑматтине тӑхӑнса йачӗ те, арӑмӗн турашӗл тӑвакан кӗрепенкине илсе пуҫне тураса йакатрӗ.

— Ну, тавай, хатӗрлен. Ӑчасем вӑраначчен ӗҫе пӗтерес пулат...

Ерхип мӗн ҫинчен каланине арӑмӗ ҫавӑнтах тавҫарса илчӗ. Ма тесен пулас ӗҫ ҫинчен вӗсем ӗлӗкхи кунах килӗшсе каварланнӑ.

— Вӑл халех кӑнселерне пырайман та пулӗ. Вӑхӑт ирҫкеха.

— Унта пырайман пулсассӑн килне кай,—хӑй патне.

Арӑмӗ претҫетаттӗле илме тухса кайсанах, Ерхип ҫӗҫҫине илсе ӗне карти йеннелле сулӑнчӗ. Паллах чирленӗ... Сывӑ ӗне ҫапла кавлесе тӑмаст ӗнтӗ вӑл... Хӑй чунӗнчен, хӑй кулат Ерхип.

Ӗне ӑна хирӗҫ хурлӑхлӑн ӗнӗрлесе илчӗ. Сисет вӑл. Чавса тӑрӑшшӗ йалкӑшса тӑракан ҫӗҫӗ ырӑшӑн мар хуҫа аллине тытӑннӑ. Йулашки сехет, йулашки минут вӑл ҫут тӗнчешӗн ӗнӗрлет. Йулашки кавлемсем унӑн ҫӑварӗнче кавленеҫҫӗ.

Ҫавӑнпа та ӗне, йешӗл унӑн чӗлхи пулсассӑн мӗн-мӗн кӑна каласа хӑварнӑ пулӗччӗ вӑл пайан кун хӑйӗн ҫамрӑк ӗмӗтлӗ чунне татакан хуҫине.

Паллах вӑл ҫакна калаччӗ:—Ерхип. Савнӑ хуҫа!.. Есӗ пайан манӑн ӗмӗтлӗ ӗмӗре татнӑшӑн епӗ хурланмастӑп. Шалккӑ мар маншӑн хамӑн хырӑмри тата икӗ уйӑхран ҫут ҫанталӑка тухакан пӑрӑвӑмта. Анчах шалккӑ, Есӗ ху пурӑнакан пурӑнӑҫна ӑнланса илейменни. Калаха, есӗ ӑҫта, тата мӗншӗн пурӑнатӑн?.. Ҫакӑ хытӑ, сивӗ картара халтӑраса ҫуралса ҫакӑн чухлӗ тӑлпӑвӗме ҫитӗнтертӗм. Тӳрех калас пулат. Ырӑ кун, ырӑ каҫ сахал курнӑ епӗ ӗмӗрӗмре. Малашнехи тивлетлӗ кунҫулӑм. Савнӑҫлӑн туйӑнса, куҫӑмсене чечекле илӗртетчӗ. Анчах вӑл ӗмӗтлӗ шанчӑк сӳнет пайантан. Манӑн тӑвансем, манӑн тантӑшсем, такҫанах вӗт таса, сутӑ, ӑшӑ витере хаваслӑн кавлеҫҫӗ. Вӗсен хуҫисем камсем, тата ӑҫта вӗсем?!. Паллах колхосра...

...Ну сывӑ пул! Епӗ ҫуккишӗн кайран тунсӑхласа макӑрнӑ ан пул... тесе Ерхипе хурлӑхлӑн, куҫҫулӗ витӗр алӑ панӑ пулсассӑн, Ерхипӗн кӑмӑлӗ ҫемҫелсе ӗнене хӗрхеннӗ те пулӗччӗ-и тен. Анчах калаҫма пӗлменни... Калаҫма пӗлменни чылайӗшӗн пуҫӗсене ӗмӗрлӗ ҫухатат ҫав шеремет вычах-чӗрлӗхсене. Ав Ерхип аллинче йалкӑшса тӑракан ҫӗҫӗ те хӗрлӗ ӗнен ҫирӗп мӑйне вӑтӑрласа кӗрсе кайрӗ. Ӗне мӑнтарӑн, чӗнеймерӗ те вӗт.—мак! анчах турӗ темӗнле акӑчан чӗлхипе.

Ене вилеймен. Ене йулашки тухса пӗтейме вӑйне хурса тапаланат. Ҫав вӑхӑтрах хапхара Ерхип арӑмӗпе претҫетаттӗл килсе кӗреҫҫӗ.

— Ну мӗнле?.. Пусрӑн ӗнене.

— Пусмасан вилет. Ҫавӑнпа сана комиҫҫи пӑхтарас терӗмӗр. Аша сайа йарасси вӗт.

...Чим ха, чим... Ерхипӗн сӑмахӗсем чӗтӗревлӗн кунчаланаҫҫӗ. Вӑл пӳрте чупса кӗрсе кайрӗ.

— Мӗн мурла хыпнӑха вӑл паранкине, тет тӗлӗнсе претҫетаттӗл.

— Ачасене шанса пулчӗ вӑл ӗҫ, тет йӗрем пекки пулса Ерхип арӑмӗ,—Паранкине вӗт каласа тӑнӑ ҫӗртрех турамасӑр панӑ.

— Та... Пысӑк инкен... Йеплеха пурӑнӑр ӗнесӗр Ачасене хӗнтерех пулат.

— Вара пусман пулсан пӗрех илсе кайаччӗ пулӗ совета?.. чӑннипех макӑрса йачӗ арӑм.

Претҫетаттӗл унӑн шанчӑксӑр сӑмахӗсем тӑрӑ ӗненми пулса ӗне карланкиҫе хыпалама пикенчӗ

Ӑҫта кунта чӑмӑр паранкӑ!?.

— Кунта, кунта сҫас!.. тет Ерхипӗ йӳртӗнчен чупса тухса. Пысӑк чӑмӑр паранкӑ аллине тытн вӑл;—Епӗ кӑна ҫӑварӗнчен кӳтӗркелесе чикесшӗн чӗ. Есир чӑс килнипе е...е... сӑмахӗ пырне ларч Ерхипӗн.

— Ех ты, Ерхип Хӑвӑлпуҫӑвич!.. Мӗскерха хӑт ланатӑн? Ху пурнӑҫна, - ху тӑшман вӗт есӗ... Са шӑн кам йӗмелле!? Е... е!?

— Мулли арӑмӗ каланипе...

— Мӗн каланипе?..

— Вара йала пӗр ӗне те хӑвармаҫҫӗ тет. Веҫе совета ҫавӑтса кайаҫ тет. Ҫавӑнпа ашне те пули ҫисе йуласшӑн...

— Сирӗнне илмеҫҫӗ. Ирӗккӗн парсан ҫеҫ. Ч хӑн вӗт есӗ. Пӗлес пулат малтан. Хӑвӑн мулна, х хуҫа пулас пулат, тесе сурса тухса кайрӗ прет ҫетаттӗл.

— Чӑнласах та!.. тӗлӗнсе кучанса йулчӗ Ерхип.- Пусман пулсассӑн Икӗ уйӑхран пӑруласа пан пулсассӑн... Килес ҫул пӑрушне патшалӑха ирӗккӗ панӑ пулсассӑн. Мулли арӑмӗн елекӗ хыҫҫӑн си кипе чуптарса кайман пулсассӑн, хӗрлӗ ӗне йулашки шанчӑклӑ мулӑм пайан кун ман ҫӗҫ мӑшкӑлӗ пулса ҫакӑнта тӑсӑлса выртман пулӗччӗ ё... ё... тесе ачалла макӑрнӑ май, ӗни ҫинех йӑвано ӗсӗклерӗ Ерхип.

Вулакан! Сирӗн йалта та ҫакӑн пек Ерхи сем пулма пултараҫҫӗ. Есир вӗсене йепле т пулсассӑн вӑхӑтра ӑнлантарса памашкӑн т рӑшӑр. Унсӑрӑн „тет" хыҫҫӑн кайса пӗр в чӑхсӑр тӑрса йулма пултараҫҫӗ шерем Ерхипӗсем.

**Митта Петӗрӗ.**

# Ӗҫпӗтекен такмаксем — Илляриус сӑвви.

Ҫырма хӗрне ансассӑн та
Кули ура йӗпенмест.
Ӗҫтвӗрт ӑшне кӗрсе ларсан,
Кули хӑмпу савӑнмасть
Кӗтӗм карӑм пахҫине те,
Йӑвӑҫҫишӗн мар, улмишӗн
Кӗтӗм ҫырӑнтӑм утарнӗке
Ӗҫӗшӗн мар, ҫапӗшӗн
Хула пуҫвар хӗррине те
Хӗрпе каҫҫӑ выҫӑҫҫӗ

Выҫӑсан та пирӗн ӗҫ ҫук...
Технӗккӑна вӗренеҫҫӗ.
Ҫак урайа шӑлмашкӑн та,
Илес терӗм пӗр шӑпӑр.
Анҫах ӑна туйанмашкӑн
Саҫҫетани тумалла.
Алла шалу илнӗ хыҫҫӑн
Лапкасене ҫӳрерӗм.
Ниҫта ҫерет курӑнманран...

Илмесӗрех тавӑрӑнтӑм.
„Кӑмпа" йерҫӗ ҫирлерӗм те,
Пуҫнитсӑна вӗҫтертӗм.
Халӑх ҫерет ҫитиҫҫен те
Ҫиртен хамах сывалтӑм.
Курларӑмӑр ҫитрӗ пулӗ,
Халӗ кайар йалалла.
Пире потшеф кӗтет пулӗ
Уйа тухса тӑнӑ пуҫ.

# Арттиссен самокриттӗк пуххинҫе

Ҫӑваш труппинҫе ответсӑрлӑх пуҫ пулса тӑрать. Нумай атминистраттӑрсенҫен нихӑшӗ те ҫӑваш искуствине малалла йарасшӑн тӑрӑшаканни ҫук. Труппӑн хайне ваҫҫи решиҫҫор та ҫук (ҫӑваш труппинҫе ҫеҫ ӗҫлекенни).



— Ку пуҫ пирӗн мар. Ку та пирӗн мар.
— Акӑ ку та пирӗн ма рҫке.
— Ӑҫта вара пирӗн?
— Наркомпрос шкапӗнҫе шыраса пӑхмалла. Унта марши?



# СУХАПУҪ ТИРЕКТĂРĔ

Аслă, уçă пÿлĕм. Йĕри таврах, елекритсă лампписем кăнтăрлахи пек çутатса тăраççĕ. Пÿлĕм варринче пысăк та вăрăм тата çийне хĕрлĕ çитсă витнĕ сĕтел ларать. Сĕтел варринче пĕр краффин (кĕленче поссутă) шывпа тата икĕ стаккан курка ларать. Пысăк сĕтел йĕри тавра çынсем ларса тухнă. Хăйсен умĕнче хăшĕ-пĕрин портфĕлсем выртаççĕ. Вĕсем (тиректăрсем) пурте йĕркеллĕн ларса тухнă та пысăк шухăша кайнă пек тăнласа лараççĕ. Варринче ларакан хыçĕнче Ленин сăнĕ çакăнса тăрать. Тата леререх ытти йулташсен сăнĕсем куранаççĕ. Ленин пуçĕ тăрринче ратио репротуктăрĕ пур. Анчах ратио та халĕ пĕр вăхăта чарăннă. Ларса тухнă çынсем шăп лараççĕ. Калаçас пулсассăн та тути умне ал лаппи тытса пĕрпĕринпе калаçаççĕ. Есир, вулакансем, манран ыйтăр—мĕншĕн апла шăппăн çеç калаçса лараççĕ—тата кам чарать?—тесе. Вĕсене никам та чармасть. Вĕсем хăйсем çавăн пек лăпкă лараççĕ, ыттисене канчĕрлес мар тесе. Хăш-пĕр чухне пирĕн пухусенче (анчах, час-часах та вăл пулать) пасарти пек шавлаççĕ. Кунта ун пек мар. Кунти пек йĕркеллĕ пуху епĕ курман та.

Вĕсем хушшинчен пĕри, варринче ларакан пысăк куçлăхли ура çине тăчĕ те:

— Тиректăрсен пысăк, аслă канашлăвĕ уçăлнă шутлатăп, тесе канашлăвĕн сатачĕсем çинчен кĕске токлат пуçласа йачĕ. Пÿлĕмре туллийех тиректăрсем. Çапах пÿлĕмре урăх нимĕнле сасă та çук. Пурте варринче калакан йулташ сăмахне куçсене сиктермесĕр питĕ тĕплĕн тăнласа лараççĕ. Каланине çырсах пыраççĕ.

Çак канашлу—пысăк канашлу пулать. Кунта тĕрлĕрен тиректăрсем пухăннă. Кунта: совхос, МТС, тракторочентттăртан килнĕ тиректăрсем, тата сухапуç тиректарĕ Катка Куçмине те чĕннĕ. Канашлура кашни тиректăрăн отчот туса памалла. Малтан сухапуç тиректăрĕн отчочĕ пулмалла.

— Сăмах сухапуç тиректăрĕ Катка йулташ сăмах илет, тесе канашлу пуçлăхĕ хăй пуканĕ çине ларчĕ. Ыттисем токлата кĕтеççĕ.

— Вăт, йулташсем,—тесе сухапуç тиректăрĕ отчот калама пуçларĕ.—Епĕ хатĕрленсе те килеймерĕм те. Отчот çырма никам та пулăшмарĕ. Йалта активсем нумай пулсассăн та. Çавăнпа малтанах отчота йапăх хатĕрленни çинчен пĕлтерес терĕм.—Хăй калама пуçлачченех краффин çинчен пĕр стакан шыв ĕçрĕ. Сухалĕсем шуралса кайнă. Пичĕсем пĕркеленсе пĕтнĕ. Хăйĕн чĕркуççисем ура çинче тăнипе чĕтреççĕ. Çÿçĕсем мелке пек ÿссе кайнă. Токлатне малалла часрĕ.—Епĕ ĕнтĕ авалхи йапалапа ĕçлетĕп. Хам та ватăлса кайрăм. Вăл йапаласем, еп ĕçлесе пурнакан сухапуç вăл халĕ пăрахăçах тухрĕ. Советсен 6-мĕш сиесĕ те мана питĕ хытă йатларĕ. Вара вăл сиесра мана çĕнĕлле çĕрĕç ушкăнĕн чĕленĕнчен те кăларса мана сута пачĕçĕ. Ун çинчен пурте пĕлеççĕ. Тата халĕ çеç Мускавра пулнă канашлура Молăттăв йултăш та хытă каларĕ... Халĕ мана çутă тĕнчере ниçта та вырăн памаççĕ. Сасă прависĕр ĕмĕрлĕхех хăварчĕçĕ... Çапла пуçласа, кайран суйа сăмахсемпе польшевикла ĕçлеме сăмах паратăп, тесе хăй отчотлă токлатне пĕтерсе хучĕ. Сухапуç тиректăрĕн отчочĕ пĕтрĕ.

— Камăн ыйтусем пур?—ыйтрĕ канашлу пуçлăхĕ тăрса.

— Манăн пур!..

— Мана парха сăмах?

— Кала малтан есĕ...

Вăт пуçланчĕ ыйтусем. Сухапуç тиректăрĕ пуçларĕ ответлеме.

— Уйар çанталăкпа мĕнле кĕрешетĕн?

— Кам. Епĕ-и? Хăраса ÿкрĕ Катка.

— Санран ыйтатпăр вĕт?

— Сухалатпăр вопшче.

— Çуракине мĕнле ирттертĕн?

— Кунпа вăхăта ирттернĕ.

Есĕ сута панă терĕн, мĕншĕн сута панăччĕха сана?

— Тырпул тухăçне хăпартайманшăн. Хамăр респуплĕкепе йăрансем хăварса 8 процчăн çĕр чакарнăшăн тата 10 процчăн ытла ана тĕрлĕрен курăксемпе çăмланса ларса, тыр тухăçне чакарнăшăн...

— Колхос çине есĕ мĕнле пăхатăн?

— Колхос мана хăй чиккине патне те йамас

— Миçе кектар çуракинче кашни лаша пуçне çĕр сухаларăн?—Кашнн лаша пуçне 2,08 кектар сухаланă.

— Начар. Епир лаша пуçне 3,84 кектар ытла сухаланă

—Вылчăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç йепле пырать?

— Пĕр качака çеç хамăн, тата виçĕ сысна пурччĕ те, килтен тухса тарнă, начар пăхнăшăн.

Ыйтусăм пĕтрĕç. пренире çурри ытла каламĕлкеречĕç, Пренире хытă хĕртрĕç. Вара тиректăрсен канашлăвĕ çапла йышăнса хăварççĕ:

Уйар çанталăкпа кĕрешес тĕлĕшпе нимĕн туман. Тата халăха ку таранччен сухапуçне усрса темиçе мĕлйарт тенкĕ ытла сийен тунăшăн сухапуç тиректăрне—Катка йулташа халех сут парса, йулашки хут айăплас. Малашне хир сухапуçне курсассăн, трактăрпа тÿррех таптатвĕлермелле...

— Тĕрĕс!..

— Урр-а-а!..

— Йулташсем йулашки сӑмах парӑрха?
— Санӑн пётрё вёт.
— Парас мён калаҭ.
— Ну вот. Есир мана тёрёс çул памарӑр. Есир пуйан. Сирён 4 мтс—110 трактӑр пур, тата кӑçал 8 МТС органисатсилетёр. Сирён çул питё такӑр. Ах-х-ххх... Шыв ёçтерёрха... Шыв. Çапла каласан, шыв ёçтерме тытӑнсанах ватӑскер урайне лаҭ ӳкрё те, çавӑнтах вилсе карё.

— Вилтёр!

— Ёмри иргнё!.. тесе калаçнӑ вӑхӑтрах епё сухапуç тиректӑрё Каткан тискер вилё питне пӑхса хӑранипе шартах сиксе вӑранса карӑм та, тӑрса ларса шухӑша кайса лартӑм. Пӳртре пурте çывраççё. Шӑллӑм çеç пёҭик сётел çине ларнӑ та шӑши куçё пек кӑраççын лампипе шкулта панӑ урокне вёренсе лараҭ.

Тепёр куннех, ирех хамӑр кӳрёшри сухапус ларт, са пурнакан Каҭӳк Хёветри старик патне кайса каçхи тёлёке тёплён каласа тӑнлантартӑм.

— Ку питё тёлёнмелле... Ман çинҭенех пулё ку,—тесе хай старик шухӑша кайса ҭёлём мӑкӑрлантарса ларҭё. Çапла ҭылай калаçса ларсассӑн колхос çинҭен калаçма пуçларӑмӑр.

— Есир колхосра-и?

— И-и! Епир такçанах кёнё.

— Çапла. Халё ҭӑн сухапуç кирлё мар çав, терё старик. Вӑл вӑхӑтра стариксем колхосра пулман. Тёлёк пулса иртнё хыççӑн тин ултӑ йетакпа колхоса кёҭё. Йалти çынсем темиçе хут та: - сухапуç лартса парха?—тесе килсессён те кӑçал пёр сухапуç те лартса йусаса памарё. Халё колхосра ёçлет. Утарлӑ ёçленёшён кӑçал преми парса халавларёç. Халё вӑл старик колхос уйхир утарнёкё.

А. Кахховски—Васухха

---

# Елёк мёнле,—халь йепле?..

— Тфу ты!..
Йаккуҭӑ—Маҭӑ
Терё ман Ваҭӑ; —
Пулмасҭ капла ҭӑтса арӑм,
Тинех епё тавçарайрӑм...
Мён ҭулҭёха арӑм,

Пирён парӑм?
— Аҭана вёртсе суртнӑшӑн Васса аппана,
Тӑхӑр тенкё...
Вӑхӑтлӑха саклата хунӑ икё сурпана,
— Тфу ты,
Анкӑ минкё,
Пулмасҭ капла ҭӑтма арӑм...
Тата камаҭҭёха парӑм.
— Вара суха тытса тутарнӑшӑн та паман.
Микка ёнер те вӑрçрёха хама...
— Ех, çав арӑм,
арӑм,
арӑм.
Куштӑркарё ман çаварӑм.
Тата сӑра тӑвас тетпёр,
Мёнха,—
Вилём штоҭ кётетпёр...
Пурнӑç...
Пурнӑç вёç хёрри
Шултӑркарё çав тери.
Пӑхха ес пуш çӳпçене,
Йе выртас вырӑн та хытӑ.
Ей, пёҭҭенлёх,
Çӳпçине!

Çӳп вырӑнне есё ывтӑн...
Кӑлмаланнӑ ҭашӑк тирёк,
Çук унта халь тутлӑх.
Курмаснам,—
Çён пурнӑç ирё
Çиçет çуламлӑн та вутлӑн.
Йе пӑх лайӑх аҭуна,
Хурт пуççи йевёр манка...
Ех, ты—тӑм çамка:
Пурнӑç...
Пурнӑç вёç хёрри

Шултӑркарё çав тери
Тата мён кётетпёр?!.
Йе ишёлен пӳртёме
Лартайрасси „хёрйёме“,
Пуш пурари çӑнӑх катки,—
„Ваҭа арӑм матки“!..
Туйа тытса тайӑнами,
Ёнтёркенё шӑшисене
Ташлаттарами...
Арӑм, арӑм, туйатна,
Каласамҭҭё ху йатна..
— Укçине вёт манӑн йатӑм...
— Ах, мур илеш,
Туйатӑн иккен, туйатӑн.
Укçине!
Савнӑ мӑшӑрӑм,
„Мёнма есё манран йутшӑнрӑн“
Тесе калама епёр хёр те мар,—каҭҭата
Старикех те мар—карҭакта ..
Шӑп вӑтам.
Вӑтам ёççынё...
Ҭуна тӑвӑртан
Калатӑп Укçине.
Пӑхха Мирунпала арӑмё,
Пури вёсен Каппик парӑмё,
Тытса тутараççё-и суха?!.
Ех, çав...
Иксёмёрте епир „мӑк сухал“,
Тытмашкӑн пурнӑçа
Вёренни пирён пит сахал.
Вёренесси хоҭҭа вӑл тармё,
Пӑхха теп Мирунпала арӑмё
Пултарнӑ тӑк, пултарнӑ...
Пирён халҭхи пурнӑçа
Хӑварса таçта—хыçа
Сив авӑрах вӑсем путарнӑ.
Вёсен машшинё кёрлет,
Анисем йӑрансӑр.
Шухӑш ерттелпе пёрле,
Хырçӑ-марçӑ ансӑр.
Пурнӑç...
Пурнӑç вёç хёрри.
Пире...
Пире вара мён?..

Пёрех тӑр хёрӳ ёçри вут хём
Уншӑн та—куншӑн та
Епёр те ушкӑнта,—
Тесе çирёплетрёç сӑмаха,
Пёр халавлӑ каçхине
Ваҭапа Укçине...
Хыçа хӑварар аваллӑха
Текех савмашкӑн унӑн хакё çук.
Ёнтсе вётелентертёр пур кахаллӑха
Çёнё хёвел хёртсе хёмленнё ҭух.
Ак çакӑ хёрринҭен
Ёçе пуçлари
Колхосӑн хирёнҭе
Ай савӑнари.
Укçине,
Савнӑ Укçине,
Аваллӑх пёҭҭенлёх ёнтё çӳп çине...

* * *

Вӑхӑт васкаҭ.
Вӑхӑт ёнтё пӑру мар,
Каç сирёлҭё,—килҭё çутӑ ир.
„Капла пулмасҭ,—
Тавай трушнӑ тытӑнар“
Тесе мухтавлӑн кёрекене ларҭё пайан аслӑ хир.
Микка тумасҭ халь Ваҭанӑн сухине.
Уйа трактӑр ватӑрлаҭ...
Сисетпёр.
Туйатпӑр çён пурнӑç уссине.
Кивви ватӑлнӑçемён ватӑлаҭ.
Микка тумасҭ халь Ваҭанӑн сухине.
Васса аппа халь ан çыхлантӑр
Вёрсе, сурса парас тесе...
Пёҭёк Майук пата варлантӑр
Йаçлёри тутлӑха ёмсе..
Кёрлет çёршыв... Кёрлет те çёмёрлет,
Ёç ывтӑнаҭ,—ылттӑн.
Пур пирён ик виçё „Çёмёрле“
Пуласси—пилёк улттӑ.

**Митта Петёрё.**

# Ђаплă ларупа йышăннă хыççăн

Сĕнтĕрвăрри районĕнђи «ИСКРА» колхосра Октапĕр праçнĕкĕ кунĕнђе ђаплă лару туса, 28 лаша ваљђи вите тума ђаплă постановлени йышăннăђĕ. Витине халĕ те тума тытăнман.



Коњух йулташ, тархасшăн ан хырха йурне пирĕн çирен. Йури витĕнтĕмĕр епĕр йурпа... шăнса вилесрен.

## Лаша тăшманĕсем.

Сарпакри (Шупашкар р.) „Тырăлăх" колхос ђленĕсем пусмалла мар çĕртенех 5 лашана пусса аш турĕç. Пусса аш тунă 5 лашаран 4-шĕ тĕреклĕ, çирĕп ĕç лашисемехђĕ.

— Ай-йай хырăм выçрĕ ман, Кавĕрле, анђах çиме нимех те çукха, терĕ колхос претçетаттĕлĕ пĕр ђленне авăн çапса пĕтерсе тавăраннă ђух.

— Ман хамăн та тăвар, купăста, çăкăр, шыв кăна, пурăнас пулат çапах та нимĕн те тума çук, терĕ лешĕ.

Урампа утса пынă çĕртех вĕсемпе Kраçĕс кулак пĕрлешрĕ. Виççĕн пĕрле шанкаса утса кайрĕç

— Лашасене пусмалла, хаљ éç пĕтернĕ, мĕнех тăвăр лашасемпе, терĕ Kраçĕс.—Ав, Мĕтри Васлейĕ поет „плукă та кирлех мар" тесе çырат, есĕр, лашасене хĕрхенетĕр. Трактăрсем туйанăр килес çул...

Колхос пуçлăхĕ ђылайђен шутланă хыççăн килĕшерех:

— Та, нађартарах лашасене пуссан та йурат, тесе çапса хуђĕ.

— Нађаррине мар, мăнтăррине пусас, аш нумайтарах, тутлăрах пултăр, терĕ çĕкленерех пуçне хыçса Кавĕрле.

Кавĕрлепе Kраçĕс тем пăшăлтатса илђĕç.

— Пусас, пусăпăр.

* * *

Колхос лашисем пайан иртенпех хуйхăраççĕ. Такăшне пусаççĕха вĕсенђен. Вĕсем хăйсен хушшинђен пайан сотсиалисăмшăн паттăрăн кĕрешекенсене çухатаççĕ.

— Пирĕн çул вăл—тĕрĕс çул, партти çулйĕрĕ.. Пирĕнтен кун пек мăшкăланине епĕр тÿсме пултараймастпăр. Пайан вилекен йулташсене асăнса, епĕр сотсиалисăмшăн татах паттăрăн кĕрешме сăмах паратпăр. Тĕп пулђђĕр пирĕн тăшмансем, кулак ĕçне тăвакансем!—терĕ пĕр лаши апат çисе тăнă çĕртен.

— Килеççĕ палађсем, пирĕн вилĕм çитрĕ, пăрахăр çиме, çавах вилмелле вĕт!—хыпăнса ÿкрĕ тепри.

— Путоннăй йулташăн сăмахне итлемен, партти çулйĕрне ăнланмаççĕ пирĕн пуçлăхсем... Хирĕçес вĕсемпе, тесшĕнђĕ тепри, анђах „палађсем" çитсе килнипе нимĕнех те калаймарĕ..

— Пĕтрĕмĕр, терĕç те, пурте хытса тăђĕç.

* * *

— Çийетпĕр ĕнтĕ аш, аш çийетпĕр...

— Çийетпĕр çав, çийетпĕр..

— Пире лашасем те аш туса çиме йураç...

— А, есĕр сотсиалисăмла выљђăх-ђĕрлĕх ĕрђетес тĕлĕшпе мĕн турăр?—терĕ пĕр пусма илсе тухнă лаша.

— Ак сире сотсиалисăмла выљђăх?—терĕ колхос пуçлăхĕ çĕççине кăтартса.

— Сире те пролеттари çирĕп алли тыткалĕ-ха.. Пĕтĕç тăшмансем, кулаксем, вĕсем майлă сирĕн пек ĕçлекенсене те тивĕçлипе тыткалĕç...

Çапла 5 лаша çухалђĕ.

Хурлăхлă салампа **В. Çиçĕм.**

# Пулӑ, пулӑ!

Кӑҫал кӗркунне, ҫенттапӗрӗн 5-мӗшӗнҫе Парттин Тӗп комиттеҫӗ „Пуҫламӑшпа вӑтам шкулсем ҫинҫен“ пит паха постановлени кӑларса йаҫӗ. Вӑл унта нумай тума хушат. Ҫав тӑвас ӗҫсенҫен пӗри—уҫитлӗсене протуктӑсем ҫителӗклӗ парса тӑрасси.

Куславкка Райсойусӗ хӑш ҫухне ҫӳлтен пыракан хушусене вулакаласа та пӑхат пулмалла. Вӑл ҫакӑнтан палӑ: сисмен-кӗтмен ҫӗртенех Тӗрлемес копперативӗ урлӑ ҫав йал тавраш уҫитлӗсем валҫи пӗр пиҫке пулӑ турттарса та килҫӗҫ. Ун пек пулӑ райопри ытти уҫитлӗсене те килнӗ пулмалла. Пиҫки пысӑках мар, пӗр 80 кило пулат, теҫҫӗ. Вӑл пулла вӑрттӑн валеҫмелле, ытти краштӑнсене кӑтартмалла мар, терӗҫ. Ҫылайах лекмелле—пӗр 5-шер кило, ҫисе те пӗтерес ҫук. Уҫитлӗсене малалла та йапаласем ытларах килет теҫе, хупӑ распретелиттӗл турӗҫ. Халӑха кӑтартма аван мар теҫҫӗ. Ҫӑнах-ши вӑл? Ҫӑнах пулсан, мӗншӗн-ши?

Вӑл йурӗха! Пирӗн пуллине ҫасрах валеҫесҫӗ. Хакӗ йӳнех те мар—80 пус кило. Пӗр кун копператтивра 53 пуса параҫҫӗҫ, ку 80 пус пулсан, шултрарах та авантарах та пулмалла, терӗмӗр епӗр.

Пӗр-ик виҫ уҫитлӗ пухӑнтӑмӑр та, вӑрттӑнтарах уҫатпӑр пиҫкене Пӑхатпӑр... ак пулӑ! Ӗлӗк пасарсенҫе вӗт ҫӗрпулӑ (моҫашкӑ) сутатҫӗҫ. Каснӑ лартнӑ ҫавах! Анҫах моҫашкӑна тӑварламасӑр, ӑшне тасатмасӑрах пӗҫереҫҫӗҫ. Вара 5–10-шарӑн тӳрех хыпаҫҫӗҫ Куна мӗнле ҫимеллеши? Шухӑша ӳкрӗмӗр. Тутанса пӑхрӑмӑр, питӗ тӑварлӑ! Пит хавас пулвӑ, йапалана ҫарӑнса та тӑтӑмӑр илме! Анҫах хӑшпӗри илсе кайрӗҫ. Вара вӗсем ӑна тӗрлӗ майлӑ ҫисе пӑхнӑ. Ҫӗрле ҫисе пӑхнӑ—ҫиме май ҫук. Ҫитменнине пит тӑварлӑ. Шыва йарса лартса пӗҫерсе пӑхнӑ—ҫав ҫавах, Пӗҫерсе типӗтсе те пӑхнӑ—ним толкки те ҫук. Ытараймасӑр епӗ те пӗр кило илсе пӑхрӑм. Хаҫ ӗнтӗ ӑна пурне те сутаҫҫӗ, анҫах никам та илекен ҫук. Пит вӗтӗ какайӗ ҫук, теҫҫӗ. Ҫӑнах та, киле пырсан, тӗплӗн пӑха пуҫларӑм Пӗрне паранкӑпа ҫисе пӑхрӑм. Пуҫӗ те хӳри—варри ҫук та! Тӑвар пусса ларасран йурат те йурат: „Тавар ҫуклӑхӗ пулнӑ ҫул аванҫӗ—пуҫ“ теҫҫӗ мушиксем. Тепӗрне татах, ҫисе пӑхрӑм—вӑл тата ирӗлсех тӑрат (Ҫӗрнӗ пулмалла). Пӗтӗм пуллине хут ҫине сартӑм та, исуҫат тума тытӑнтӑм. Вӑрӑмӑшӗ ҫур вершукран пуҫласа пӗр шите ҫитекеннисем пур. Темле пулӑсем—йаҫӗсене пӗлеймерӗм (епӗ шыв патӗнҫи ҫын марта, йаҫӗсене калаймастӑп). Ҫӑрттан ҫӗппи майлӑраххисем те пур. Ӑна ҫавӑнпа ҫапла шухӑшларӑм: пысӑкраххисен ҫӑварӗнҫе ҫуршар пуллӑн хыпнӑ вӗт пулӑсем пур. Ҫӑрттан—пулӑсене ҫийет теҫҫӗ. Кун йышшисем пулӑ майӗ пекрех, анҫах ҫак пулӑсем хушшинҫех хӑрушла, тӗлӗнмелле пулӑ (те пулӑ вӗсем!) пеккисем те нумай. Вӗсӗм лапка, сарлака, Пуҫӗ темӗн пысӑккӗш. Пуҫӗ хыҫҫӑн тӳрех хӳри. Хӳри ҫылай вӑрӑм. Халиҫен ун пек пулӑ курманха епӗ. Тимӗр шапа майӗ те пур, анҫах урисем ҫук; ҫурӑмӗ ҫавӑнне пекех хытӑ, хурарах йыт пулли майӗ те пур, анҫах пысӑкрах. Шапа тесен, шапа мар! Ҫисе пӑхма хӑрарӑм! Ӑна пирӗн таврара никамах та ҫисе пӑхмӗ. Кӗнекесенҫе пулӑ таврашне пӗтӗмпех пӑхса тухрӑм, ӑна тупаймарӑм. Те пулӑ вӑл, те темӗскер! Пулӑ ҫук, пулӑ ҫук теҫҫӗ, пулли пулсан илмеҫҫӗ тата! Ытла иртӗнсе кайнӑ уҫитлӗсем те, туглине шултрине пӑхаҫҫӗ, шелмӗсем, мурсем!

Ех, пулӑ, пулӑ! Сана уҫитлӗсен вӑй хӑватне хӑпартма йанӑ пуҫ те, анҫах вӗсем сана ҫийесшӗн те марха! Ларан та ларан Ҫелпо лавккисенҫе! Апӑрша!

Тем те килсе парӗ ха пире Райсойус претҫетат. йулташ Соловйов! Вӑл уҫитлӗ таврашне пит йуратат пулмалла. Ҫула вӑл йепле хут ҫинҫе сарҫусем, какайсем параҫҫӗ! Пайоксене те вӑхӑҫӗпе парасшӑн вӑл, анҫах октапӗр уйӑхӗшӗн пур ҫӗрте те паманха.

Уҫитлӗ.

# Пайан кунта, ыран лере...

Кӗҫӗнйелҫӗкри перекет касси 1931-мӗш ҫулта 8-мӗш ҫурта куҫрӗ. Перекет ӗҫӗ йапӑх пырат.




Перекет касси—коҫҫевкӗк.

# Вăл утарнĕк пулнă.

„Йетĕрнекасси (Шупашкар р.) йалсовеҫĕ оппортунисла кулаксем майлă ĕҫленипе парттипе правиттĕлствăн кăтартăвĕсене йапăх пурнăҫа кĕртсе пырат. Ҫавăнпа та Шупашкар райĕҫтăвкомĕн тройкки Кирилăва йалсовет пуҫлăхĕнҫен кăларса ҫапрĕ.

Йалсовет кăнтселерне халăх лăнках тулнă. Вĕрен ҫекли пек ҫĕлĕмĕсене претҫетатле кĕтнĕ май паклаттарса лараҫҫĕ. Ҫеккреттар пĕҫҫенех йайонран килнĕ хутсемпе авраша ларат. Сехет йĕппи вуниккĕ ҫинелле шăвăнат.

— Ма килместха пайан претҫетатлĕ? Налук тӳлемеллеҫҫĕ!

— Манăн тырă мĕн ҫухлĕ леҫмеллине пĕлмелеҫҫĕ!

— Ҫерулми леҫмеллине ыйтмаллаҫҫĕ! Куршĕ йалĕсем хĕрлĕ опоспех карĕҫ.

— Манăн купăста-кăшман!...

— Манăн вăрман ĕҫлемеллине!..

— Манăн ҫăхă памаллине!

— Манăн хур!.

— Сӳс-кантăр!..

— Ҫеккреттар те пĕлети тен?—Ҫук, ҫук епĕ пĕлместĕп!—ответлет ҫекреттар, плансене хатĕрлеменха тес вырăнне.

— Манăн шкула кайасҫĕ, йатăм пурши?—терĕ ҫăтаймасăр Тарйе инке те халăхсем хушшинҫен.

— Килсен калĕ!—ответлерĕ ҫекреттар.

— Ех, пулас ҫук иккен кĕтсе!.. Тухса кашăлтатрĕҫ кăнтселертен халăх.

* * *

— Тройккă, тройккă! Шупашкартан килнĕ Тĕрĕслеме!.

Хăвăрт пыр, Кирилăв!—шаккарĕҫ кантăкран претҫетатле.

— Ăҫта? Шупашкара каймала-и?

— Кантселере ҫĕнеҫҫĕ!—иккĕн-виҫҫĕн. Хăвăртлаҫҫĕ!

— Ну, лекрĕм, пулҫĕ. Мулкаҫă пек тапăлтатрĕ Кирилăв кăнтселере.

Пĕр самантрах ҫитсе тăҫĕ тройккă умне.

Ăвăннă лаша пек ури-аллипе туртăнса хашкат Кирилăв. Тăр пылҫăк хăй. Урамра пылҫăк ăшне васканипе персе аннă вăл.

— Мĕн пулнă ара сана? Хĕнемерĕҫ пулĕҫ-ке?— Ыйтат хуларан килни.

— А еп васкарăм снаш. Ӳкрĕм пылҫăка. Хăвăртлăхсем вĕт хаҫ. Утарнĕкле!

— Йăвашланат Кирилăв.

— Утарнĕки ес?

— Ара, унсăрăни! Утарнĕк конешнă! Хăй ҫапах сиксе ӳкес пек ҫĕтрет.

— Но вот, тăвариш утарнĕк, йепле пыраҫҫĕха сирĕн ĕҫсем. Паллашас пулат-ха пирĕн.

— Хăшĕсем-ха вăлсем?

— Сăмахран тырпул хатĕрлесси?

— Сӳтсе-йаватпăрха ăна епĕр.

— Укҫа-тенкĕ миҫе проҫҫăн пухнă тата?..

— Пухасшăнха ăна епĕр.

— Ҫĕрулми?..

— Планĕсене танаштаратпăрха.

— Сӳс-кантăр?..

— Планĕ пурҫĕ пуласха

— Вăрман, шкул вутти мĕнҫухлĕ хатĕрленĕха?

— Кайса пăхасшăнҫĕха епĕр вăрманне.

— Миҫе аҫа ҫӳреҫҫĕха сирĕн шкула. Пурте-и?

— Кĕрсе курасшăнҫĕха шкулне еп.

— Ҫирĕп сатанисемпе минҫе кулакха сирĕн?

— Ҫирĕп, х-х-хм, минҫе, мин... Шутламалаҫҫĕха

— Миҫе тенкĕ укҫа пухса леҫнĕха есĕр?

— Леҫсе, леҫ-ҫ-ҫ, леҫмелеҫҫĕ.

— Вҫетки есĕр ĕҫлеме шутлаттăр ĕнтĕ?

— О-о-о! Шутлатпăр, конешнă. Унсăрăн утарнĕки вара еп:

— Кам калат сана утарнĕк тесе?

— Хам, кам калатăр!

— Утарнĕксемпе йунашар тăман ес. Утарнĕк вăл „тăватпăр, шутлатпăр"—тесе тăмаст. Рас туса хурат ĕҫе, ҫынсем плансене тултарса иртернĕ. А есĕр!..

— Епĕр те!..

— Мĕн есĕр те?!

— ?....

Лаштăр шанса ларҫĕ Кирилăвăн супăҫ хăмпувĕ.

Тĕрĕслесе тухнă хыҫҫăн Йетĕрнекасси йалсовеҫĕ оппортунис лаҫакине хулай таранах путса ларни палăрҫĕ. Кирилăв хӳттипех кулаксем те ҫирĕп сатанисене тултармасăр аҫашланса пурăннă мĕн. Иалсовеҫĕн пур прорывсем те Кирилăв кулаксен сăпкинҫе йараннинҫен пулса пынă. Ҫавăншăнах!

— Сана ваҫҫи советра вырăн ҫук!

— Оппортунис!!

— Кулак сăпати!!

— Марш!—тесех вăрҫăнт кăларса ҫапрĕҫ Кирилăва советран.

Йетĕрнекасси йалсовеҫĕ халĕ утарлă хăвăртлăхсемпе сывлат. Кулаксем те ҫирĕп сатанисене мекĕрленсех тултараҫҫĕ Кирилăв та:

— Сулăнҫăккрах пулнă мĕн еп. Ҫынна пула хам!..—кăтăрт-катăрт хыҫат ĕнсине.

Сиснĕ хăйех айăплине.

**Н. Майак.**

---

# Шкула „кайнăран."

— Тухтăр пиҫҫе, тархасшĕн куҫăмсем курмаҫҫĕ тесе, справккă текенне парха, унсăрăн мана текех шкула ҫĕнеҫҫĕ.

— Нумай пулати суккăрланни?

— Нумайах мар, ҫак шкула вĕренме ҫĕнҫĕҫ те, ҫавăнта кĕнеке ҫине пăхсанах курми пулса ларҫĕҫ те халĕ пĕртте курмаҫҫĕ.

**Инай Ф.**

# Пĕр пек шалăпăсем.

Пĕр кун хушшинҫе пилĕк шалăпă килҫĕ „Капкăн" ретаксине Шупашкар пушти ҫинҫен. Пĕри— „Правтă" пыми пулҫĕ, тет. Тепри „На стройке" йатлă литтераттурăпа хутошĕствă шурналĕ вырăнне, иншенерпа технĕксен „Строиттĕл" шурнал илсе пыраҫҫĕ, тет. Тепри... теприн... „Исвеҫти" пымаст. Кашни кун пекех ҫавăн йышши шалăпăсем.

Ҫыхăву кантурĕ потписҫĕксемпе ҫавăн пек ĕнте сыхăну тытат. Лайăх мар ку ҫыхăну. Саккуна хирĕҫ пыракан ҫыхăну ку. Сута парсан, лайăхах лектерме пултараҫҫĕ ку сыхăнушăн.

# Выставкка—автан йашки.

Вăрманкасри (Çĕрпӳ районĕ) Кăвакал Елекçин октапĕрĕн 19-мĕшĕнђе „алтан йашки“ ăшĕнђе кăвакал пек ишсе килнĕ. Авăн пĕтернĕ, çĕрулми кăларнă, купăста каснă, салат авăртнă, сăра тунă. Урăх мĕн кирлĕ. Автан йашки пухас.

— Анђах пӳрт пĕђĕкрех, çĕнĕ хăнасенђен намăс. Урăх çĕре тупма май килместши, карђăк?— ыйтат Елекçи,—аха Пракух Илйушран ыйтас!

— Ыран пирĕн выххотной. Йара парăр... Шкул пушах пулат... расрешени пађĕ шкул пуçлăхĕ Илйин.

* * *

Тырпулпа коллективисатси кунĕ йађĕпе выставкка тума тивĕçлĕ шкул çуртĕнђе ђаплă ĕçкĕ, тепĕр майлă каласан „выставкка“ пырат.

— Салатне шатилккă сĕлĕрен хывса турăм та кăна ăслите Шерепет пекех пылак пулђĕ те, сăрин тути те аван курăнат-ха, тутантарса çӳрет Елексей. Çак кукăђ ăшне „вођтмăн“ текен çĕр улминђен турăм та—славнăй лайăхха,—тесе хăйĕн „експонађĕпе“ паллаштарса çӳрет Елексейăн матки.

№ Манăн експоната çисе пăхăрха, çакна „Праушвейăн“ купăстаран турăм,—тесе мана хĕрĕнђе лараканскерне кукăђ пырса тыттарђĕ Елексейăн хăйматлăх амĕш. Йалт çисе йараттăм, аран туртса илђĕ йунашар ларакан правасăр Иакку.

— Çакна Михаља Партасĕн рамăшнăй вĕллинђи Кавкас йăхĕнђи хуртсем пуçтарнă пылран турăм. Сыпăрха, Иван курнат,—пыллă кăрђама—„Экспонат“ сĕнсе çӳрет Паљук матки.

— Тата, тата нумай паллаштарђĕç експонатсемпе.

— Ну тавай ваљс, неђђевă тут çемĕсемпе лапăртатмалли пур, кунта улахра мар вĕт,—терĕ пирĕн шкул пуçлăхĕ Иљйин кармуђ каласа суптăрканă Сантăра.

Ваљспа карĕç пирĕн пуçлăхсем Никиттинпа иккĕш. Ваљс нумайа ђăсăлмарĕ, вĕсем хыççăн правасăр Иаккусем, Хумма Лексантăрсем, Çимйан Таљоксем йарапађĕç йурра:

> Ай ну хăйматлăх,
> Есĕр халĕ кăрђама,
> Ай, ну пуçана
> Кĕместпĕр хаљ колхоса...

тесех сикрĕç Елексейăн выставккинђе Илйин расрешени панă шкул çуртĕнђе.

Кайран.. выставккă руковотиттĕлĕ Елексей „вођтмăнран“ туса илсе панă експонатшăн Таљок пиђĕшне пĕрĕмĕш „премиˮ пађĕ (хĕçтимĕртен тунă витрепе пуçран, сăмсаран йун сирпĕниђђен). Иккĕмĕш „премиˮ Паљук маткине пыллă кăрђама ĕçтернĕшĕн пађĕ правасăр Йакку.., Илйина та преми парађђех пулĕ те,—тухса вĕçнĕ никам та сисмен тапкăпа Илйина та сисмен.

— Премишĕн ан хуйхăр Илйин! Хамăр та парăпăр... Капкăнран тивĕçлинех. Електрă.

# Ђелейсĕр ĕмĕт.

„Йĕпреç йалповĕ (Йепр. р.) щăнтса касса путвала тултарнă пахђа çимĕçсен кулленхи плокнотĕнђен“

I

Пĕр шăпшанкăр уйар ир купăстапа кăшман тĕл пулђĕç хăйсен пахђинђе. Пит шиккарни çĕрте навус тăкнă йăран çинђе.

— Сторовă, йулташ купăста!

— Сторовă, йулташ кăшман!—паллашрĕç вĕсем,

— Ех, йепле есĕр çав тери илемлĕ, ђуп тăваси мĕн сана купăста тус! Вăр çавракa сирĕн пуç. Сар хĕрпекех есĕр сарă. Кирлех иккен сире лайăх тарă!

— Ан тăрăхласам кăшман тус. Ан пулха ес ман тăшман. Миçе кило ес туртан?

— Улт-çиђ кило таран. Кăлараççĕ çĕртен аран.

— Кайатпăр, снађăт, столовăйа, тавай пире такана. Шап лекесђĕ хурана. Апат-йашка пирĕнтен пулат ĕнтĕ аванах;

— Çавна калани те такçанах!

II

Кĕркунне. Шанкăр уйар пит çанталăк сиввипе мухтанат.

Ăшă кунсем иртсе карĕç, инçех мар хĕл çывхарат Йăран çинђи купăста куççулпех йĕрет.

— Ы-ы-ых! Сивĕрен те сивĕ. Сайа кайат ӳттирĕм!

— Сторовă, купăста, мĕнле пурнан?

— Сторовă, кăшман, ма аташан?

— Мĕн есĕр, купăста, пит хавшанă. Хуçаим сире пăхма маннă.

Те çав тери хытă хĕненĕ. Халерă мари сире йернĕ?

— Ан калах, кăшман, пурнăç пит айван. Ăштулашпех шăнса лартăм, Ђаххуткăна йерсех карăм. Анђах кăшман ан çилленĕр, хусамăрта есĕр шăнтакана йернĕ.

— Вђомшĕ телă, пирте-им айăп?

— Ан калах пурнăç питĕ йапăх!

— Хăçан пĕтĕ вăл хуçасăрлăх!

— Май килнĕ ђух шăнса хыт. Кам айăплă çавна тыт. Вăт йепле пирĕн пыт!

— Ер-е-е-е! Хăçан ђыслăçĕ пире?

Хĕвел шăл та йăл кулат. Йăкăлти хĕр пекех выљат. Путвал та вăраххăн ăшăнат.

— Мĕнле пурнăç купăста?

— Ниђево аптрамастăп. Вăраххăнах çĕретĕп. Есĕр тата?

— Ирсĕ-ĕ-ĕр! Ăшăм-ђиккĕм çĕрсе тухрĕ. Йулашки тапхăр ђаххуткăна куçрĕ.

— Вăт сана столовăй, хавасланакан малтанах!

— Ан та кала!..

— Йепле ленкĕнха йашкашне, кăшман тус!

— Тĕлĕнмелле уш!

— Ну епĕ çавах куриђђен йашкашне лекетĕп. Вара пĕђĕк туталлă майрана пĕр лайăх хăстаратăп!

— Ан йӳте ĕсĕ, тĕнђери тăрăн!

Пĕлместниха ăçта халĕ пирĕн вырăн?

— Столовăйрах!

— Анта кала! Пирĕн вырăн пулĕ çырмара.

— Мĕнма ара?

— Çĕретĕн те ара. Мĕн тумалла санпала?

— Н-та! Аван пулĕђђĕ хамăртан малтан сӳрĕк ĕçлекенсене кăларса тăксан та!..

— Ан васка. Вăхăт çитĕ ак!

**Н. Майак.**

# Снађђок.

— Ту-у-ууу!.. Канаш стантсине ҫитсессӗн тимӗр ӑйӑр кӗҫенсе йађӗ Стантсӑра халӑх пасара пухӑннӑ пек тулса ларнӑ. Вакун ӑшӗнђе шӑрӑх (пӑђӑ) пирки пурте тулалла тухаҫҫӗ. Пӗр вырӑс 8-мӗш №-лӗ вакун ӑшӑнђен тухрӗ те, ман паталла утса килет.

— Ех... Ей... Тавариш?

— Ну, ђом тело?!

— Ӑҫта кунта РӖК ҫурђӗ?

— Во-о н ҫавӑнта —тӗллесе вырӑса кӑтартрӑм та вӑл ђасрах вакуна кӗрсе йулташӗпе йапалисене йӑтса тухрӗҫ. Иккӗшӗте пысӑк вырӑс Ђӑвашла пӗлмеҫҫӗ. (Вырӑслах калаҫатпӑр конешнӑ). Йапалисем хӑйсен питӗ нумай. Икӗ пысӑк йешђӗк, тата алла тытмалли сумккӑ пур. Иккӗшӗн те ђаплӑ сӑран портфӗл аллинђе.

— РӖК ҫавӑнта еппин?

— Ҫапла, ҫаплах,—тесе вӗсене кӑтартса йатӑм. Вуникӗ сехет. Хӗвел пушшех пӗҫертет. Вӗренекенсем апат ҫиме столовӑйалла ђупаҫҫӗ. Хай икӗ вырӑс РЕК йамшӑкӗ ҫине ларнӑ та Канашран тухсан тӳрех хӗвел тухӑҫ йенелле ђуптарђӗҫӗ. Тусан мӑкӑрланать. Ҫатан урапа хыҫне пысӑк йешђӗкне лартнӑ.

— Пасарлӑ йал пури кунта, тесе ђӗптесе пыраҫҫӗ икӗ вырӑс лашине хӑваласа пыракан йамшӑкран.

— Ав, ҫав Муђар пасарӗ.

— Пасарлӑ йал ҫав.

— Кӑҫан пасар пулать?

— Пайан пасар унта.

Икӗ вырӑс пысӑк сӑмсине тӗлме тӗл турӗҫӗ те шӑппӑн темскер калаҫса илђӗҫӗ.

— Айта вӑл йала?!.

— Мана ҫоровнӑ,—терӗ те йамшӑк лашине пӑрса Муђара кайакан ҫулпала ђуптарђӗҫӗ аналалла Ҫитрӗҫӗ Муђара. Пасар кӗрлет. Икӗ вырӑс пасар варне тӑратрӗҫӗ те хай йешђӗкне уҫса снађђока сутма тытӑнђӗҫӗ. Йешђӗкре: профсойус, Петтилеткӑ, Ким тата тӗрлӗрен снађђоксем выртаҫҫӗ.

— Мӗн ђухлӗ снађђок?

— Тенкӗ ҫурӑ.

— Хаклӑ, теҫҫӗ те пурте вырӑс патӗнђен пӑрӑнса кайаҫҫӗ. Пӗр арӑм ҫу сутса ҫӳрекенскер (вырӑсла пӗлмест ӗнтӗ вӑл) вырӑс патне пырса тӑђӗ те;

— Масло.. Масло... тесе ђӗрес ҫинђи ҫине кӑтартать.

— Снађђокпа илем?—вырӑс икӗ снађђок илђӗ те арӑма тытарать. Арӑм пӑрахрӗ те утса кайрӗ урӑх урампала. Вырӑссем ҫусӑрах тӑрса йулђӗҫӗ. Пасар саланђӗ. Вырӑссем снађђокне пурӗ те виҫӗ тенкӗлӗх ҫеҫ сутнӑ. Хай вырӑссем лав тытаҫҫӗ те йалсем тӑрӑх тухса кайаҫҫӗ. Ҫӗнӗ Ахпӳрт ларать. Ҫулҫинђе Йалпон лапки пур.

— Тӑрат лашуна?

— Тр-р ррр. Вырӑссем йешђӗкне илеҫҫӗ те лапкана кӗрсе кайаҫҫӗ.

— Санӑн 200 тенкӗлӗх снађђок илмелле, тесе снађђокне кӑларса параҫҫӗ.

— Пире Райсойус ун пек йапала илме хушман. Илместӗп,—тесе вӑрҫах калать прикасђӗк.

— Пирӗн токкумент пур!.. Ҫав хушӑрах РӖК лав парӑр, тесе панӑ ӗнентерӳне кӑтартаҫҫӗ.

— 100 илетӗп.

— Йурать.

— Тавай укҫа?

Ҫӗр тенкӗ илетте ђуптарать малалла. Ҫапла виҫӗ кун Йалпо лапкисем тӑрӑх ҫӳресе вырӑссем снађђокне сутса пӗтерђӗҫӗ те кайрӗҫ урӑх района. Вӑл снађђоксем халӗ те лапкасенђе сутаймасӑр выртаҫҫӗ.

**Вӑҫухха С.**

# Сӗнтӗрвӑрри райӗҫтӑвкомӗ упполномођӑннӑйӗсем

**(Йефимӑв, Каврилӑв, Шутейӗв, Куҫмин, Краснов).**




— Хаҫатсенђе мӗнле хыпарсем пур? Тырӑ хатӗрлевӗ ҫинђен ҫырма пӑрахмаҫҫиха?

— Ҫукха. Ӗлӗкхи пекех пӗрер странитсӑ ҫырса пыраҫҫӗ.

— Кӗт, кӗт кӑҫал тырпул хатӗрлевӗ ҫинђен ҫырма пӑрахасса Ҫавна кӗтсех 'пирӗн колхос патшалӑха тырӑ памасӑр тӑђӗ те... Тата нумайрах кӗтмелле пулать пуђха.. ҫырма пӑрахасса. Пета кӑҫал!

# Хӑрушӑ хыпарсем.

Ытла та хӑрушӑ хыпарсем. Пӗтӗм ҫан-ҫурӑма ђӗтрентерекен хыпарсем, пуринђен ытла выђӑхӑнне...

Сталин районӗнђи (Вӑтам Атӑл крайӗ) „Ђемпулаткӑ“ колхосӗпе „Ђӑваш“ колхоссенђе выђӑхсене пусса пӗтереҫҫӗ. Ђарма никам та шухӑшламасть.

Вӑл колхоссенђе, сӑмахран, пырать те колхоҫнӗк претсҫетаттӗл патне, сӑмсине нӑш-нӑш туса ҫапла калать:

— Инкек пулђӗ манӑн, претсҫетаттӗл йулташ! Тухрӑм та алла ҫӗҫӗ тытса килкартине.. патак ђутлас тесе,—сасартӑк ман ҫинелле ӗне мӗкӗрсе пырса кӗђӗ. Мӗн тӑвӑн ӗнтӗ? Ҫӗҫӗ тӑрнех пулђӗ. Парха мана справккӑ хӗрлӗ ӗнем вӑхӑтсӑрах вилсе кайни ҫинђен.

Телейсӗр выђӑхӗсем, ҫавӑн пек ҫӗҫӗ тӑрнех пулса пыраҫҫӗ. Колхос правлени вӗсене хӗрхенме пӗлмест.

# Хăйсенех хĕстерĕç.

Колхоçнĕксен пухăвĕ шавлаť, кашлаť халăх. Хаваслă пайан вĕсем.

— Ей, шеремет шертешнĕкĕ. Пайанхи пек паллă кун пулман-ха пирĕн пурнăçра!—пуçларĕ претçетатлĕ токлата.

Тупăш, тупăш — тырпул валеçетпĕр вĕт пайан. Тавай калаçăр. Камăн мĕнле сĕнӳ пулаť ку ыйтупа? Но ыйту, лапăр-лапăр мар вара. Çăрйосни!

Пирĕн плапна тырпулла, йетокран, ţăх-ţĕпрен, сӳсвантăра хĕрарăмран, ухăпа улăма выţăхран валеçмелле!—пĕлтерĕ претçетатлĕ.

— Во-во-во! Маттур плян, лапах епĕр шутланă пек тувă! Но пашкасем те сирĕн. Ţисти хосплянски!—шаклăтатрĕç мĕн иккĕнне туйса илнисем (пайансем).

— Сысвине ма шутламарăр тата? Ахаţ ţухсе сысна пахса вырăнта пулмалла теттĕр хусамăр. Прiçитиума кăна лартмастăр. Халĕ хăварнă. Мĕн парас теттĕр ăна?

— Çĕрулмипе виккă. Калама маннă!

— Хĕрлĕ тĕпеклĕ автаяне тата?..

— Ţăх-ţĕп шутне кĕрет вăл. Унта илет нормă.

— Во-во. Мăнă кайракаллă такине?...

— Лепсĕре çăмлă сурăхне тата мĕн параттăр?—ыйтрĕç иккĕн виççĕн.

— Выţăхсем шутнех кĕреççĕ вĕсем. Утă улăм илеççĕ!

— Ей, пастай, пастай! Есĕр манса хăвараттăр. Кăркка açипе ами йулăрĕçĕ пирĕн. Лешĕ каптăртик!—тесе ахраканĕ. Йĕгем çине пырса туй арăмĕ пек çаврăнкалаţţĕ арь?

— Ţăнах та. Ăна пахаракхине-хура тулă парас пулаť.

— Мĕнле тăвлавмалла сирĕн йетокран, выţăхран, ţăх-ţĕпрен тевине?—ыйтрĕ тарăхса Трихвăн Муţи.

— Çаплипех. Урайĕвţе упаленекен Саţккăран пуçласа, кăвак сухаллă Макар таран пурне те нормă паратпăр. Выţăхĕ ţĕрлехĕ, ţăххи-ţĕппи те çавах!

— Акромун паţах урăхла каларĕ вĕт пĕр кунне. Тупăша ĕç кунĕ тăрăх валеçмелле терĕ?—шавларĕç пĕр кĕтесрен темиңçейăн.

— Кам хăйамаţĕ унпа аппалавмалла. Ăçта унта маңрĕ. Тем те вĕрентеç. Вĕсем хыççăн кайсан!..

— Е е-е! Бĕсен йетокĕсем сахал та.

— Йетокранах! Ţăх-ţĕпренех!

— Çаплипех йышăнатпăр! Хăнт-хăнт тĕккелесе илтĕç пĕрпĕрне айаккисенţен. Мăţ-маţ хуткаларĕç кусĕсене кулак шухăшлисем.

— Çĕнтертĕмĕр!—пăшăлтатрĕç вĕсем. Паллах пайансемпе кулак майлисем.

* * *

Çăпата кантрине пăру ţăмласа татсанта пайанхи пек тарăкман Трихвăн Муţи. Ţăпăш-ţăпăш хулăпа тиверкелекипех иртерсе йанă ăна вăл. Пайан тăк, çав тери хыгă тарăхнă. Çийĕвţи сăкман тӳмисем те çилли шăвăçаймавнипе пăркакинех татăлса ывтăннă ун. Елĕк çĕр валеçвĕ ţух кулаксем ăна йапăх çĕр тивертвĕшĕн, çавнашкал тарăхыăţĕ вăл. Кĕçĕр те çавăн пекех ţашкăрса çитрĕ киле. Çенĕкрен вăрахăн йапшăнса кĕрсе, кутник сакки çийĕвţе ăшă ыхăра çыврăракан карţăкне хурама хăкĕ пек ţышкипе пена! тутарţĕ айаккинţен.

— К-хоз!—антăхса карĕ карţăкĕ. Йĕср, мĕн те пулсан хушă-хура пулнă пулĕ вĕсен тесе ан шутлăр, кунта паţах урăххи.

— Ма çавнашкалах, Трихвăн, епĕ йашиха хаţ?—найкăшса йаţĕ карţăкки вĕçке сывлăшне çавăрса илсе.

— Есĕ йашă мар çав халĕ. Емĕр вĕçĕвţе те пĕр аţа ţĕри те курайăмарăм санран!

— Мĕн тăван çав хутах аţа-паţапа есĕ. Телейе йатă çисе кайнă пурĕ пирĕнне? У-у у—йĕрет карţăкĕ.

— Çавăн пек çав пирĕн телей. Кĕçĕр колхос пуххивţе тупăша йетокран, выţăхран, ţăх-ţĕпрен валеçмелле турĕç вĕт. Сӳс-кантăра хĕрарăмран.. Мĕн тивет тетĕн пире иккĕне. Тăрăшса ĕçлени те харама кайаť.

— Аţасем усрама илес пулаť?—терĕ карţăкки вăрахăн.

— Хĕрпе ул!.. Унсăрăн сӳс-кантăр тивмест. Ţăхă тата, ţăхă. Унсăрăн сĕлĕ памаççĕ. Ех, сана, ан пусса пĕтер терĕм вĕт ţăххисене. Пăçламĕш!

— Авган пекех авăтма пуçларĕç те ţăххисем. Ţăхă авăтсан инкек пулаť теççĕ. Çавăнпах та пусрăм. Пуçĕсене карта урлă петĕм.

— Çакна сиссе авăтнă вĕсем.

— Апла мар, кӳршĕ арăмĕ тăвар çитерке пуласха. Тăвар çисен ţăхă авăтаť теççĕ.

— А-а з! Вăл кулаксем сыснана та авăтма вĕрентĕç. Тупăш кун пек валеçме те леш колхосри кулакĕ хĕтĕкленĕ, теви иитĕнет те...

— Е е-е! Унпа иккен ăна куми пĕрмайах выţăхсем парнелет. Нумай выţăхпа вумай тырпул илмелле. Еккей кайăксем!

— Кайăксен ăсĕ çитĕ-ха вĕсен. Кĕçĕр санăн пилĕк ţăхă суйăн илсе килмелле. Çавсемпе пĕрлех икĕ аţа усравлăх тупмалла. Апţах ывăлпа хĕр пултăр. Унсăрăн сӳс... Асту!—хатави паţĕ Трихвăн карţăкне.

— Есĕ пĕţţен аçтан тупса çитеретĕн вĕсене.

— Хăтте аçтан туп. Тырă валеçиţţен пулмаллах вĕсем! Айăп санра. Ţăххисене пуснă, аţине те есех туман рас.

Марш!

* * *

Ик-виç кунтанах Трихвăн Муţийăн йышĕ тăватăна çитрĕ. Таçтан айакран илсе килнĕ терĕç аţисене. Ţăх-ţĕпсем те какала пуçларĕç кил картивţе.

— Мана тăватă йетаклă тумалла, иккĕ апţах мар. Ţăхăсем те çиţţĕ-саккăр,—пĕлтерĕ правленире Трихвăн Муţи.

— Аçтан тупрăн аţусене. Хĕсĕр арăму тури мĕн?—шăлтах тĕлĕнĕç Трихвăн Муţирен.

— Иккĕштен срасу тăваттăн. Йепле тимлеť!—шап çапаççĕ аллисене колхоçнĕксем.

— Тăваттă мар, саккăра та çитерĕн йыша хаţ. Усрама илтĕм вĕт. Рас йетокран...

— Ере, есĕ йепле ţейе. Усрама илнĕ аţасемпĕн тырпул памаспă. Есĕ ăна йури хăтланнă!—ответлерĕç Трихвăн Муţийе.

Кун хыççăн Трихвăн муţи хулана виттĕрех ţуптарţĕ. «Çавсене маххă паратăпи! Пăхха мăшкăлаççĕ»—çула тăршипех çавăн пек арпашса пыţĕ вăл.

Çитсен ĕçсем мĕнле пулнине те пĕтĕмпех каласа паţĕ.

Хуларан хăвăртах прикатă килсе, тупăша ĕç кунĕ тăрăх валеçсе паţĕç.

Трихвăн муţийе—утарнĕк тесе парнелерĕç. Ţăнах та утарнĕк пулвă вĕт. Ĕç кунĕсем те пуринţен мала тухрĕç.

* * *

Тен кун пекех пулман пулĕ те, апţах мăн çурт Тăранти (Шупашкар р.) колхосра тупăша йетак тăрăх валеçни, çавнашкалах Сурăмварринţи (Елĕк р.) колхос пăрçана, сӳс кантăра ţун тăрăх валеçни „аптрамасť" еппин. Трихвăн муţисем те çавăн пек шухăшланах. Унсăрăнах пулман ĕнтĕ. Н. Майак.

# Пĕртен пĕр тăлăх.

Кăнттамсен йалĕ талккăшпех колхоса куçрĕ. Кĕтўрен тарса йулнă имшеркке сурăх пек, пĕр Кăнттам çеç колхоса кĕреймесĕр йулţĕ. Ма кĕреймерĕ?.. тесе ыйтĕ ман çырăва вулакан хисеплĕ йулташ. Есĕ вара ăна çапла ответлĕп: Кăнттам çектантсен йăлине хисеплевĕ.. Ăна кўршĕ йалĕнţи хăйматлăхĕ, хăй çектантсен пуçлăхĕ пулнă пирки, текех колхоса хирĕç ăнлантарнă. Вара Кăнттам колхоçнĕксем çине тăшманла куçпа пăхнă. Вăл: колхоса хам вилсен те кĕместĕп, çўлти патшалăха таратăп, колхоçнĕксене вилсен тамăка йарса, вĕри çатма çулаттарăпăр, тенĕ. Çапла вăл хăйĕн хĕйматлăхне вилсен ырă курасса шанса, хăйĕн йулашки йĕмне те парса йанă. Хăйматлăхĕ ăна пĕр йĕм вырăнне иккĕ, виççĕ илсе килсе парат тесе шутланă вăл. Çăкăрсене, йашкасене совет йапалипе усă курас мар, çылăх пулĕ тесе, тăварсăр çиме вĕреннĕ. Колхоçнĕксене хирĕç пулас пулсан, уймаха йерпĕ пек пулса, Кутăн тăнă, аснă, йурланă ташланă,—тем те туса култарнă. Йăтă йăли тукаланисем те пулкаланă. Вăл çавăн пек майсемпе хăйĕн çылăхĕсене кулакан колхоçнĕк çине куçарасшăн пулнă. Анţах ун çылăхĕсем колхоçнĕксене хĕрхеннĕ—куçмас. Кăнттамăн хăйенех çылăх лупас пек тиенсе ларнă. Вăл кĕтнĕ ырлăхсем килмен. Хăйсен турри те пулăшман. Пурнăç йăварланнă çем йăварланса пынă. Вара вăл: çĕнĕ пурнăçпа пĕрле унăн турри те патгăрăн çуралса тухнă пуль, тесе шутланă. Мĕншĕн тесен, вĕсен йалĕнţи колхос Кăнттам ĕмĕтне пăхмасăр ўссе пынă. Мĕн тумаллине те Кăнттамран ыйтмен. Çитменнине Кăнттама йертсе пыракан хăйматлăхне клас тăшманĕ вырăнне хурса, таçта айакkаллах ăсатнă. Çавăнпа хаţки вăхăтра Кăнттам ним тума пĕлмесĕр пурăннă. Унăн пуранăçĕ çип çинţе çакăнса тăнă пек туйăннă. Паллах, йертсе пыраканне ăсатни Кăнттамшăн тĕнţе пĕтнĕ пекех туйăннă.

Пайан ак раштав праçнĕкĕ çитрĕ. Кăнттам нимĕн тума аптранă йенţен христос майлă кайма шут тыгрĕ. христос сăнне кĕтессе кĕртсе лартрĕ те пуççапма тытăнţĕ.

— Ей, Христос,—терĕ вăл,—каçар мана çак пысăк çылăхран. Есĕ сан умра пысăк айăпа кĕнине хамах туйса илтĕм. Хам ĕмĕрте сана çеç йуратса, мĕн пур вăйпа сана пăхăнса пурăнап. Хамăн таса ţĕрене пĕтĕмех сана парнелĕп. Каçар мана Христос, каçар...

Кун хыççăн Кăнттам пĕр виççĕ ţĕркуçленсе пĕр шит хулăмăш тусан тулнă урайне ţуп туса илţĕ те, Христос çине татах тинкĕререх пăхрĕ. Тусанпа тулнă тутисене шăлса илţĕ. Йулашкинţен ун çиве Христос кулса пăхнăн туйăнţĕ. Вара Кăнттам савăннипе тепĕр вагă шĕвĕр сухалĕсене каţака пек силлесе, урайне кисрентерсе ташласа илţĕ. Анţак ăна татах та ĕç пĕтмен пек туйăнţĕ. Тарăн шухăша кайрĕ вăл.

— Аха, терĕ аса илсе.—Христос килĕштерсе пурăнма хушнă, пĕр питĕнţен çупсан тепĕр питне çавăрса пама каланă.. Пайан Христос çуралнă куна пускилсемпе пĕрлешсе, тивĕçлипе уйавласа иртерес. Пĕрле савăнас...

Анţах çак вăхăтра вăл хăйсен йалĕ талккăшпех колхоса куçнине. хăй пĕţţенех тăрса йулнине паţах манса кайнă. Пĕртен пĕр тăлăххан пурăннă пирки, вăл колхоçнĕксем раштава мĕнле иртерме шутланине, мĕнле хатĕрленнине те пĕлмест. Пĕр ытти çулхи пек çамрăксем «мĕк-мĕк каţаки», «хĕрсем хĕсĕр...», тата „сурхури“ тесе йўрламанни çеç ăна тĕлĕнтерет.

Нумай шухăшласа тăмасăрах Кăнттам кўршĕ çынни Миххалка патне раштав иртерес пирки калаçма тухса угрĕ.

* * *

Михалкка пўртне аţасем плаккатсем, раштава хирĕç лосăнксем çапса илемлетсе лартнă. Пĕр лосăнкĕ çинţе: «тĕн сĕрĕмĕн праçнĕкĕ—раштав тĕп пултăр», тесе çырнă. Миххалка хăй ирхи апат çисенех колхосăн тимерçĕ лаççине лашасем таканлама тухса кайнă. Пайан вĕсем унта раштава хирĕç супотнĕк тусах ĕçлеççĕ.

Кăнттам пырса кĕнĕ ţух Михалкка аţи Йакур „пурте турăсăрсен ушкăнĕн ţленне кĕрер“ текен лосăнка çырса çапрĕ. Çав вăхăтра вĕсем патне Кăнттам пырса кĕţĕ.

— Христос çуралнă!—терĕ вăл кĕрсенех. Лăпкă çил вăхăгĕнţе йывăççем тайăнса ларнă йевĕр пуçне тайрĕ.

Камк й, Коптосăй Христос çуралнă кунта? Пулман Христос йепле çуралтăр вăл?- ыйту çине ыйгупаţĕ Йакур. Кăнттам тунката пек хытса тăţĕ те, алтăр куçĕсене ţарса йарса çакăнса тăракан лосăнксем çине пăхрĕ.

— Йа... Йа... Винават! Йа не пăнимайем. Каçарма ыйтатăп есĕ. Рати Христа...

— Нимĕн каçару ыйтмалли те çук, муţи. Есĕ пурвăçран кайа тăрса йулнă. Санăн çектантсене пăрахса, çĕнĕлле пурнăçпа паллашмалла. Çавă çеç... при том, ратио Христосăн мар, ăна Поппов профессăр шутласа кăларнă. Савăн ăна та лартса, усă курмалла..

— Ел... еп çектантран тухнă вĕт, халĕ Христосах ĕненетĕп...

— Христосне те пăрахмалла... Çук çынна çук çын суратниче курнă и ес хаţţен?

— Ĕ... ĕ... тĕн çинţен лайăхрах ăнлантарса парăрха мана.

— Вот еттă пăнимайу!..

* * *

Михалкка Йакурĕ патĕнţе пулсан кайран Кăнттам пĕр тĕлĕнмелле тĕлĕк курţĕ. Çав тĕлĕкe аса илсен-Кăнттамăн савăннипе ţĕри те çуралса тухма тăрат. Çапах та çуралас марха, тесе килĕшет вара. Унăн тĕлĕкне манăн курман, илтмен йулташ руţкăсăр перасар, хутсăр çапла çырса паţĕ: Усет, тет, вăрман. Çав вăрман патĕнţехре пĕр пысак лаţака пулнă мĕн. Вăл лаţакана çынсем пăхăнса тăнă. Кунсăр пуçне, çав вĕçĕхĕррисĕр лаţака аваlранпа пит нумай çынна çăтнă. Унăн тĕпĕ те пулман. Кăнттамсем çав лаţакана кайăксем тытма кайсан лекнĕ. Çак тĕпсĕр лаţака Кăнтама мăй таран çăтнă та тытса тăнă. Унţţен те пулман, вăрмантан пĕр Колхос йатлă угаман сиксе тўхнă. Вăл лаţака умне пырса тăнă.

— Çапла çав, Христос турă лаţаки пĕтĕмпех те çăтса йама пултарат. Çавăнпа та сыхланарах лаţака умне пымалла, тенĕ Колхос утаман Кăнттама. Унтан лаţакари мĕн пур шыва ĕмсе типĕтнĕ те Кăнттама туртса кăларнă.

— Çпаççипă, çпаççипă,—тенĕ Кăнттам колхос йатлă утамана. Вара хăй те вăрансах кайнă.

Колхосра кăштах пурăнсанах Кăнттам çав тĕлĕкĕн туппине тупрĕ. Христос лаţаки вăл—тĕн сĕрĕмĕ пулнă иккен.

В. Çсĕм

# Тăмана.

(Çăпата кĕввипе.)

Мăн-Тукташри (Елĕк р.) колхос претçетаттĕлĕ Совин Т. (Тăмана Тимийанĕ) оппорттунисла ĕçленипе халĕ те авăн çаптарман. Тырпулă парас плана тултарман.

Иртнĕ ăшă кунсенђе,
Сарă хĕвел ăшшинђе,
Претçетаттĕл кахалпа
Çаптармарĕ авăна.

Тăмана, тăмана
Пирĕн пуçлăх тăмана,
Тăмана, тăмана.
Йурпа çăмăр пĕрлешсе,
Ислетеççĕ çĕр питне.

Вăтăр капан пĕр çĕртре
Пăсланаççĕ йĕпепе.
Тăмана, тăмана...
Патшалăха парасси
Манăç пулђĕ пулмалла
Кулаксенĕн пĕр тĕкки
Совин пулђĕ пулмалла.
Тăмана, тăмана...

**Акташ.**

## Колхоçнĕксен ђастушкисем.

Ех, йантра, йантра хут купăс—
Сассу кайтăр катана
Санпала йурлап хаљ еп те
Хамăн çĕнĕ йурăма.

Çуркунне çитсе килсессĕн
Шав йурлаççĕ шăпђăксем.
Йалĕпех колхос тусассăн
Тин пĕтеççĕ кулаксем.

Çерçи темђул йурлăсан та
Унтан шăпђăк пулас çук.
Кулак темђул тăрăшсан та
Колхос çынни пулас çук!..

Халĕ ĕнтĕ колхоса
Йăлĕпелех куçрăмăр;
Пур ге пĕр çын пек пулса
Нумай мала кайрăмăр.

Халĕ ĕнтĕ пур ĕçре те
Пĕрлешсех ĕçлетпĕр.
Çĕнĕ пурнăç кун çулне
Малаллах вĕçлетпĕр! **В. Васкай.**

---

## „Хĕрлĕ Пайăрка“ колхос „Капкăн“ шурнала йанă уççыру

„Капкан“!

Савнă хĕстерђĕкле „Капкăн!“ Сана „Хĕрлĕ Пайăрка“ колхос пайан Аслă октăпĕр 14 çул тултарнă йатпа електăрла салам йарат.

Çĕнĕ тапхăрти ђăвашсен ăншăртран сывалнă куçĕ уçăлни пайан аван курĕнђĕ. Пуринђен ытла пирĕн колхосра..

Пĕлтĕр епĕр тăрăшса крахмал, гата паткă пĕçерекен савăтсем лартсађђĕ колхос вăйĕпе Çав савăтсенђе електăр çунатђĕ Халĕ çавă електăра йупасем тăрăх правулкăсем кăмтарса йала илсе килтĕмĕр

Халĕ пирĕн колхоçнĕксен кашнийĕн килĕнђех електăр çунат. Питĕ аван вулама унăн çуттинђе сана, „Капкăн“

Пирĕн колхосра кулас килнипе аптăрансем хамăра кура çитет. Ахаљтен мар, есĕ „Капкăн“ пирĕн колхос йађĕпе 64 екçемпљар килсе тăраăн. Анђах колхоçнĕксем кĕтсе ывăнаççĕ сана Темшĕн вара есĕ çав тери хыпаланмасăр çўреĕн. Хаљхи вăхăта пĕлетĕн вĕт ес. Вăхăдĕ хĕрўллĕ те, пит васкавлă Санăн та çав вăхăтран улас пулмаст пирĕн шутпа

Кулас килнипе аптăракансем пур тенĕрен есĕ—пурте кахалсем тесе ан каласам Апла зăл испађ калашле „политиђĕски неправĕљнă“ пулат. Кахалсем çук мар тунмастпăр Вăл кахалсемпе мĕнле кĕрешнине санăн кашни №№-ђех вулама пулат. Вĕсем сăнĕ мĕнĕпех санăн страницусем çине кĕрсе лараççĕ хăш ђухне.

Анђах вĕт пирĕн утарнĕксен прикати питĕ вăйлă ĕçлет. Вăл прикатăна йертсе пыраканĕ комсомолĕс Шаршан Иссакĕ Ахаљтен мар Иссака колхос сăран ата парса парнелерĕ

Парнесем илекенсем ытти ђленсем те пулђĕçĕ те, анђах вĕсен йађĕсене кунта кăтартас мар пулĕ теп.

Ну мĕн калас ĕнтĕ, „Капкăн“ăм, сана йулăшкинђен?. Ђасрах килсе тăрсамђĕ пирĕн алла. Çавна çех калатăп. Пирĕн йыш халĕ Октăпĕр праçнĕкĕн йађĕпе, тата електăр çуннă хисепе ђысласа 16 хуçалăх çĕнĕрен хутăшрĕ.

Вăл снаш санăн потписђĕк тата 16 хутшăнни пулат пирĕн колхос йађĕпе.

Ђасрах, вăхăтран вăхăта килсе тăрсамђĕ. Хĕрў ĕçрен килсен сана вуланă хыççăн шăмшак лăштăрах, кăмăллăн çемçелсе кайаканђĕ.

„Хĕрлĕ Пайăрка“, Аслă Патĕрйел районĕ. **Митта Петĕрĕ**

---

## Епĕ питĕ хăрарăм.

„Киоск №1“—тесе, сарă сас паллисемпе çырнă пĕђĕк киоскă не çитсе тăтăм. Пăхатăп. Киоскăра пĕр хура имшеркке кађайăн пек шĕвĕр сухаллă çын мешĕлтетет кунта.

— Сирĕн ђăвашла хаçат шурналсем пури?—ыйтатăп кунран. Шурă куçĕсене выљаткаласа тăл ман çинелле вăл.

— Красная Чувашия сегодня не работает. Выходной день!—тветлерĕ мана ку.

Ђашăл çĕкленђĕ пуçри çўç. Шап ўкрĕ киоскă умне карттус. Мĕн тума лартнăха ку çынна кунта. Çав терийех ăспуçĕ йлăкши ун. Хăра хăрах, ђуна хытаркаласах каллех кунран.

— Ђăвашла хаçат-шурналсем пури сирĕн?— ыйтатăп. Алли кăна сулђĕ ман йенелле хайхискер.

Шалтах аптрарăм. Тен ку Нимĕçĕ, Америк çынни мар-ши? ав тери мана йуратмаст пулĕ тен, епĕ—ђăваш вак халăх ађи т,—тĕлĕнсе тăратăп. Тавайкă кăна вырăсла шаплаттарса па- тетĕп.

— Каккой шурнал йест у вас на ђăвашла йасыкком?—тесе вăрса хутăм.

— Сыха тар!—ответлерĕ мана ку.

Ăсталла тарас Тар тетĕçке ку мана,—пăхкалатăп каллĕ-малле. Никамта мана хăвалани курăнмаст. Троттуар тăрăх çынсем йерипен кăна уткалаççĕ.

— Куталла пешат?—ыйтрăм хăвăрттăн.

— Не бежать!.. Вот оно!—Çĕклесе кăтартрĕ мана ку „Сыхă тăр“ шурнала.

— Еккей тамаша, вырăс иккен ку. Шел, шел, ђăвашла пĕлменнипе аташнă мĕн вăл. Пăнђăсене кăна ђисламан еппин. Кăçарăрах!

Еп татахха. Йурат кăшт вырăсла перкелешетĕп те.

Ман хыççăн тăк пĕр муђи аппаланђĕ. Алли-урипе хăлаçланат. Çĕлĕкне хывса кăтартат. Сăкман аркине тытса пăхат.

— Шкулнĕк, шкулнĕк хаçат куппи пайăл!—аркашат вăл.

— Ђаво!— лак-лак каркалат çăварне киоскăри.

Кун пек мыскăрасем пирĕн ђăваш муђийĕ кăлăхах тĕл пулат Шупашкарта. Калаçасшăнах муђи ђăвашлах.

Пĕлмест вăл вырăсла, тăллансах ларат ђĕлхи вара. Н.





Сдано в производство 7-XII 31
Подписано к печати 1-27-XII 31
Отв. редактор А. В. Васильев.
Секретарь ж-ла И. Илларионов
Выпускающ. редактор Н. Янгас

Ответлă ретактăр **А. В. Ваççилйĕв**

Ст. ф. Б. 200×285. Об'ем 1 п. л. 112,000 п. з. в п. л. Изд. газ. „Канаш“

Уполн. Чувашлита № 754. Чебоксары, тип. № 1 Чувашгиза. Заказ № 1597. Тираж 6700 экз.